26-95

Ађа-пӑђа кӗнеки

Н. ПОЛОРУССӐВ

# КУШАКПА АВТАН

## АЂА-ПӐЂА ВӐЙИ

ЂӐВАШ РЕСПУПЛӖКӖНЂИ КӖНЕКЕ КӐЛАРАКАН УЙРӐМ
ШУПАШКАР * 1926

Типография
„Чувашская Книга“
Б.-Советская 6.

Чувашлит № 1302 Напеч. 3000 экз.

# Кушакпа Автан.

**Кушак.** Ну, сыв пул, Автан тус! Шăшисемпе мулкаҫ ҫĕпписем тытма ухутана кайатăп епĕ.

**Автан.** Хăвăртрах таврăн, Кушак тус. Мана пĕҫҫен пурăнма питĕ киҫем пек туйăнат. Йуррăмсене йурласа пĕтерсен, пăртакҫă пĕрҫĕсем ҫăткаласан, урăх вара нимĕн ĕҫ те ҫук манăн.

**Кушак.** Пит хăвăрт килетĕп епĕ! Есĕ ҫурта лайăх пăх! Пуринҫен ытла ҫейе тилĕ тусран хытă сыхлан.

**Автан.** Вăл мана мĕн тума пултарĕ вара?

**Кушак.** Ҫейе тилĕ тус сана, ҫўлĕ тусен хушшине, тĕттĕм вăрмана, тĕпсĕр шăтăка, таҫти патша ҫĕр-шывне ҫитиҫҫенех илсе кайĕ.

**Автан.** Епĕ унтан хăрамастăп! Тилĕ туса ҫĕнме вăй ҫитет ман. (*Сăннине сулкалат*). Пуҫĕ-хўри-мĕнĕпе касса татăп!

**Кушак.** Ну, Автан тус, ан мухтан! Асту, асапа кĕрсе ан ўк. Пĕр вăхăта сывă пул!

(*Майрака кăçкăртса йурлат*).

Ухутана кайатăп,
Мухтав йурри йурласа!
Хуйхă вĕт-шак кайăка
Çĕрте ђупса çӳреме!
Шăши тус та шăтăкран
Çутта тухса çӳреймĕ?

(*Йурласах тухса кайат, йурри йерипен пĕтет*).

**Автан.** Ек, лайăх-ĕçке сатра çӳреме! (*Санние сулкаласа çапа-çапа йанăратса йурлат*).

Çут хĕвел, çутăлса,
Ђăн лайăх кун пулса,
Кантăкран хĕрелсе,
Ман çийе пăх халĕ!

Ки-ки-ри-кик! Ки-ки-ри-кик! Ки-ки-ри-кик!

**Тилĕ** (*тухса йунаса*). Ђим халĕ! Пит хытах ан çухăр! (*Аллисене сулкалат, çиђĕ тарçи хӳме хыçне пытанса тăраççĕ*).

**Тилĕ** (*уç кăмăлпа*). Сывă-и, Автан тус?

**Автан.** Ну, тата сывă-и!

**Тилĕ.** Халĕ есĕ йепле илемлĕ, Автан тус, ылттăн кикирик!

**Автан.** Ну тата, ылттăн кикирик!

**Тилĕ**. Ех, савнийĕм, çуллă пуçăм, пурçăн сухалăм.

**Автан**. Ну, çапла пуљ çавă! Есĕ тем те калăн

**Тилĕ**. Сана çывăхарах пырса пăхса, куљ-ђенеç парас килет манăн. Сан валли пăрçа-па тĕрлĕ пĕрђĕсем илсе килтĕм епĕ. Кил-ха, тух кунта!

**Автан**. Сан йапалу мана кирлĕ мар! Тух-мастăп.

**Тилĕ**. Санăн ман пек мĕскĕн урçаран хă-рас пулаҭ-и вара? Есĕ хăвăн ĕмĕрĕнте мĕн ђухлĕ паттăрсене çĕмĕрсе пăрахнине епĕ пĕлетĕп вĕтĕ.

**Автан**. Çĕмĕрнĕ çавă!

**Тилĕ**. Мĕскертен хăратăн вара есĕ?

**Автан** (*каштп çинелле пăхкаласа*). Ним-рен те хăрамастăп епĕ.

**Тилĕ** (*ывăç тупанне çапса*). Манăн шан-ђăклă ђурамсем, тытăр çакă кахала! Çыхăр унăн шурă аллисене! Ăна ултавçа виç лапа-па турттарса, тaçти инçетри, сĕм вăрманти тарăн вара, ђăтлăха илсе кайăр! (*Çийĕнтљи хура туттирне кăпăр-капăр хывса пăрахаҭ, ђурисем автана хупăрласа илсе турткалаç-çĕ. Автан тапкаланаҭ, ăна çыхаççĕ*).

**Автан**. Ех, Тилĕ тус, Тилĕ тус! Сăмахусем пыл пек тутлă та, ху пăрăç пек йÿçĕ! Ех, ултавçă, ултавçă! Мĕн тума есĕ мана çийесшĕн? Манăн илемлĕ тумтире тăпăлтарасшăн?

**Тилĕ**. Санăн ÿт-тирÿпе тумтирÿ маншăн паха мар. Епĕ сана авалхи çилле тавăрасшăн? Астăватăн-и есĕ! Йепле епĕ кĕркунне тĕттĕм каççенҫе (çĕрсенҫе), выçăхса çиме шыраса, ҫупкаласа çÿренĕ ҫухне, пĕр çурта кĕрсе пĕр пĕҫĕк çеç ҫăхха тытса çийесшĕн пултăм. Есĕ урпă пек çухăрса йатăн. Урусемпе тапăртататăн, аллусемпе çапкаланатăн. Хăранипе, ҫăхсем кăрăлтатма, хурсем какăлтатма, йытăсем вĕрме, ĕнесем мĕкĕрме, лашасем кĕçенме тытăнҫĕç. Хĕрарăмсем ухватсемпе, арçынсем пуртăсемпе ҫупса тухрĕç те, усал мăшкăл вилĕмрен аран-аран тарса хăтăлтăм.

**Автан**. Ех, йуратнă тусăм, тусăм! Тархасшăн асапран хăтар мана. Пĕр сăмах та пулсан калаттар халĕ. Хамăн айăпшăн епĕ сана усă тăвасшăн. Игле халĕ, Тилĕ тус! Манăн сасă питĕ лайăх. Çавăнпа уккасем вулама, палата ҫĕнҫĕç мана. Савран епĕ пусăлăх пулма вырăп ыйтатăп. Есĕ питĕ ҫейе.

Çырăва та пĕлетĕн. Çыру çырса анђах тăрăн. Пуйан сынсенђен укçа пухăн, ђухăнсенне тирĕсене сĕвĕн. (*Тилĕ шухăша кайат, ђурисем тăн итлесе тăраççĕ, Автан хўме урлă вĕçет*).

**Автан** (*хыта кăçкарса*). Кушак тус! А, Кушак тус! Васка ђасрах, мана асапран çăлма. Тилĕ тус мана теттĕм вăрмана, çулĕ тусен хушшине, таçти патша çĕр-шывне илсе кайасшăн!

**Кушак** (*ђупса керсе хайар сасăпа*).

> Хĕрлĕ атă тăхăнса
> Епĕ килетĕп ыткăнса,
> Тиллĕн пуçне çавăнпа
> Касса татса пăрахма!

(*Тилĕпе тарçисем тăраççĕ*).

**Автан.** Тавта-пуç сана, Кушак тус, мана вилĕмрен хăтарнăшăн! Епĕ те саншăн тăрăшăп.

**Кушак.** Ну, кирлĕ мара ан палка (калаç). Ўлĕмĕнђен хытă сыхлан. Асту! Тилĕ туса ан пан! Епĕ инçе кайатăп, санăн сассăна илтеймĕп. Сывă пул! (*Трупа кăçкăртса кайат. Мусăкпа йурă сасси, шăнккăрав сасси çывăхарса килет*).

**Тилĕ** *(çинçе саспа йурлат).*

Автан тус, Автан тус,
Ылттăн кикирик!
Çул çине пăх халĕ,
Пăрçа çиме тух халĕ!
Автан тус, Автан тус,
Ылттăн кикирик!
Санăн пуçна çу сĕрнĕ,
Есĕ пурçăн сухаллă.
Хĕп-хĕрлĕ сăмсаллă,
Пыл пек тутлă çамкаллă,
Манăн йеннелле пăх халĕ,
Пăрçа çиме тух халĕ!

**Автан.** Çук ĕнтĕ! мана илсе тухаймăн, улталаймăв! Сан йенне ĕнтĕ çаврăнса та пăхмастăп.

**Тилĕ** *(йурлат).*

Автан тус, Автан тус!
Ылттăн ука кикирик.
Санăн пуçна çу сĕрнĕ,
Есĕ пурçăн сухаллă.
Çул çинелле пăх халĕ,
Тĕпĕр-тĕпĕр ут-ури,
Ђăнкăр-ђăнкăр ђĕн йĕвен,
Шăнкăр-шăнкăр шăнкăрав.

Улпутсем килеççĕ,
Укçасем параççĕ,
Ылттăнпа сапаççĕ!
Пухакан никам çук.

(*Автан тÿссе тăраймаст, пăхма тухат. Ђÿрасем йна тытаççĕ. вăл хăталасшăн çапкаланат, хатăлаймаст*).

**Автан.** Кушак тус, Кушак тус! Тилĕ тус мана тытрĕ! Çăварĕпе çыртрĕ! Сĕм тĕттĕм вăрмана илсе кайат вăл мана. Таçти патша çĕр-шывне. Çÿлĕ тусен хушшине. Тарăн çырма хĕррине. Ылттăн хăйăрĕ çине. Ылттăн пуçăма çиме.

(*Сасă лăпланат, шăнкăрав сасси çухалат, кайаççĕ*).

Кушак (*ђупса кĕрсе ђăл-ђал пăхкаласа*). Ех, ĕлкĕреймерĕм, Тилĕ тус манăн йуратнă йулташа тытнă. Апса ларђĕ манăн хĕвелĕм! (*Йĕрет*) Ну, Тилĕ тус, сыхлан, епĕ сана тавăрăп, ђĕрĕ хăвармăп!

*Ђаршав.*

## II-мӗш пай.

(*Отсенă. Тилӗ çуртҫӗ, вăрман*).

**Кушак.**

Килеп ҫупса васкаса,
Хыпаланса хашкаса,
Шăхлиҫӗпе шăхăртса,
Хӗрлӗ атă тăхăнса,
Тилӗ туспа çапăçма,
Автан тусăма çăлма.

Параппан тăн-тăн-тăн,
Ылттăн хӗлӗх нăй-нăй-нăй,
Пурăнаҫ тет Тилӗ тус
Хăйӗн хӗрлӗ йăвинҫе.
Тилӗ тусăн çиҫӗ хӗр,
Аслă хӗрӗ Пукане.

**Пукане** (*ҫупса кӗрсе*). Кам кунта? Питӗ лайăх йурлаҫ!

**Кушак** (*ăна тытса*). Мана есӗ кирлӗҫҫӗ! Шăппăн тăр вырăнта! Асту, хăнах наҫар пулӗ! (*Пукане йерет*).

**Кушак.** Тар-тăр-тăр, нăй-нăй-нăй
Манăн ылттăн хӗлӗхӗм!
Пурăннă тет Тилӗ тус
Хăйӗн хӗрлӗ йăвинҫе.

Тилĕ тусăн çиҫĕ хĕр:
Аслă хĕрĕ Пукане
Иккĕмĕшĕ Путене.

**Путене** (*ҫупса кĕрсе*) Кам кунта? Питĕ хитре йурлат!

**Кушак** (*ана малтанхи патне тĕксе*). Асту, сассу ан тухтăр!

Тăр тăр тăр купăсăм!
Йанра ылтăн хĕлĕхĕм!
Шуранкă тет Тилĕ тус,
Хăйĕн хĕрлĕ йăвинҫе.
Тилĕ тусăн çиҫĕ хĕр:
Аслă хĕрĕ Пукане,
Иккĕмĕшĕ Путене,
Виççĕмĕшĕ Пулене,
Тăваттăмĕш Путирек,
Пилĕкĕмĕшĕ Утирек,
Улттăмĕшĕ Пинерук,
Çиҫҫĕмĕшĕ Синерук.
Тăр тăр-тăр купăсăм,
Ылтăнлана хĕлĕхĕм,
Йанра йултăр сан сассу!

**Пурте** (*кĕрсе*). Кам пире ҫĕнет? Кам кунта çапла питĕ илемлĕ йурлат! (*Кушак пурне те йăвăçсем патне хăваласа çыхат*).

**Автан.** Мана сыхлакан никам та çук. Тилӗ тус хӗрӗсем пурте тарса пӗтрӗçӗ. (*Кушак патне ыткӑнса*). Кушак тус, есӗ-им?

**Кушак.** Тар, Автан тус, хӑвӑртрах. Епӗ вӗсемпе хам пӗҫҫен те тӑрӑпатӑп. (*Автан тарать*).

**Тилӗ** (*кӗрсе йӑвашшӑн*). Ӗмӗр ӗмӗр вӑрманта пурӑнатӑп. Сан пек мухтавлӑ паттӑр купӑсçӑ курманҫҫӗ. Кала халӗ, маттурӑм, кам пулатӑн есӗ! Мӗн йатлӑ? Хушамату йепле?

**Кушак** (*хивре*). Епӗ Кушак аçи, Ваççили Петровиҫ. Мана кунта сирӗн пата Çӗпӗр вӑрманӗнҫе йӗрке кӳме, пӑлхавсене пӗтерме йаҫӗç.

**Тилӗ** Ех, Кушак тус, Кушак тус! Епӗ сан çинҫен нимӗн хыпар та илтмен вӗт: пӗрттe пӗлместӗп сана. Манӑн йӑвана кӗрсе çӑкӑр-тӑвар астив халӗ. Унтан вара епӗ сана уса тӑвӑп. Пӗтӗм вӑрмана кӑтартса çӳрӗп. Пӗтӗмпех каласа парӑп. Вӑрманта йӗркесӗрлӗхе пурне те пӗтерӗпӗр. Шывпа çуса тасатнӑ пек тасатӑпӑр.

**Кушак.** Санпала манӑн кивӗ ӗççем те пур халӗ.

**Тилӗ.** Ну, кам киввине асӑнать, унне куçне ҫавса илмелле.

**Кушак.** Есĕ, Тилĕ тус, питĕ илемлĕ йурлатăн, санăн сассу питĕ лайăх.

**Тилĕ.** Авланнă-и есĕ, çук-и, Кушак тус?

**Кушак.** Çук, авланман епĕ. Сана, Тилĕ тус, тăлăх тесе илтнĕ епĕ.

**Тилĕ.** Кĕр ман пата хăнана, пар мана хĕрсене. Пăх халĕ есĕ вĕсене йепле хăратнă.

**Кушак.** Кађђа кил мана, Тилĕ тус, иксĕмĕр вăрманта йĕрке кўрсе тăрăпăр.

**Тилĕ.** Ай-ай! Есĕ мĕн тавасшăн мана!

**Кушак.** Кăмиссар арăмĕ пулса пурăнăн.

**Тилĕ.** Апла пулсан, питĕ лайăхђĕ те!

**Кушак.** Йурĕ еппин, ил хăвăн хĕрўсене.

**Тилĕ.** Йуратнă хĕрĕмсем, епĕ кăмиссара кађђа кайатăп ĕнтĕ?

Ђупăр хăвăртрах,васкăр. туй хатĕрĕсем хатĕрлĕр, хăнасем ђĕнĕр! Туй туса пĕтĕм çĕре кисрентерер! Мĕн пур халăх тĕлĕнтĕр!

**Кушак.** Ну, епĕ Автан туса савăнтарма кайатăп. (*Кайат*).

**Тилĕ.** Халĕ мăнле ĕç пулђĕ. Пĕр шухăшламасăр, аса илмесĕр кăмиссар арăмĕ пулса тăтăм.

*Ђаршав.*

**Ш-мĕш пайĕ.**

Ђурасем апат хатĕрлеççĕ, Тилĕ хĕрĕсем тенкел çине лараççĕ. Автан пулĕмре урлă-пирлĕ уткаласа çӳрет.

**Пукане.** Йурла, Автан тус, савăнтар пирĕн кăмăла. Санăн сассу питĕ лайăх!

**Автан** (*йурлат*).

Çурхи кунсем çутăлса
Илемленсе курăнсан,
Темĕн ђухлĕ çырмасем
Шăнкăртатса йухрĕçĕ.

Тĕрлĕ тырă-пулăсем
Тинĕс хум пек хумханђĕç!
Тем пек хӳхĕм ђеђексем
Вутăн-хĕмĕн курăнђĕç!

* *
*

Йăш-йăш çăмăрпа,
Вăш-вăш çилпеле,
Лăс-лăс силленсе,
Йешерсе ӳсрĕ
Тĕрлĕрен çимĕç.

Сат пахђисенђи
Улма йăвăççем

Сĕтпе витнĕ пек
Куранса тăҫĕç.
Сарă çăкасен
Симĕс тăррисем
Пуçсене тайса
Лăпсăртатрĕçĕ.
Катмар хурăнсен
Кăтра пуçĕсем,
Лăстăр та лăстăр
Йăштăртатаççĕ.
Халтанлăхсемпе
Хăмăш-хăйахсем,
Шыв пек хумханса,
Ҫăштăртатрĕçĕ.
Хĕвел йăл-йăл-йăл
Кулса çех тăҫĕ;
Йăлтăркки çине
Пăхма хĕн пулҫĕ.
Çут çанталăка
Кăн-кăвак сывлăш,
Кăвак ҫаршав пек,
Хупласа тăҫĕ!
Хĕсепĕ те çук
Вĕт-шак кайăксем
Ҫăрик та ҫăрик
Ҫăрăлтатрĕçĕ.

Шăпҫăкĕсемпе
Сар кайăкĕсем,
Ҫаплă мусăк пек,
Йанăратрĕҫĕ.
Касси-кассипе
Хура пĕлĕтсем
Тĕрлĕ йенелле
Шыв пек йухрĕҫĕ!
Аслати авăтрĕ
Ҫиҫĕмĕ ҫиҫрĕ,
Ҫĕр-шыва симĕс
Пуставпа витрĕ.!
Кик-ки-ри-кук!
Кик-ки-рик-кук!
Тем пысăккĕш ырлăхсем
Пирĕн пата килҫĕҫĕ!
Ки-ки-ри-кук!..

(*Пурте алă ҫупаҫҫĕ. Автан савăнса урлăпирлĕ уткаласа ҫӳрет. Сунатҫĕсемпе ҫапкаланат, миҫиххине ҫанкăрттарат. Кушакпа Тилĕ кĕреҫҫĕ*).

Кушак. Ҫĕннĕ хăпасем ҫас килеҫҫĕ-и? (*Алăк хыҫĕнҫе шăна сасси илтĕнет*).

Шăна. Камсем кунта йăвара! Кам кунта ҫăтлăхра!

**Пӳрте:** Епӗ Кушак тус.
Епӗ Тилӗ тус.
Епӗ Автан тус.
Епӗ Пукане.
Епӗ Путене.
Епӗ Пулене.
Епӗ Путирек.
Епӗ Утирек.
Епӗ Пинерук.
Епӗ Синерук.
Епӗ Шӑна нӑй-нӑй-нӑй.
Епӗ Шӑшп шӑтӑкра
Тӑпра ҫавса выртатӑп.

*(Алӑк хыҫӗнче).*

Епӗ Шапа ма-ка-как.
Епӗ Мулкаҫ пак-пак-пак.
Епӗ Сӑсар тус, пасар хӑни.
Епӗ Сӑвӑр тус,
Вӑрттӑн ҫӗртре ҫӗр пӳртре,
Пурӑнатӑп пит хитре.
Епӗ Кашкӑр Кашман,
Сурӑхсене кышлакан.
Епӗ упа Утаман
Ӗнесене тытакан.

**Пурте**. Пирĕн патра хăна пулăр! (*Пурте пуç тайса пĕр-пĕринтен сывлăх ыйтса паллашаççĕ, лараççĕ*).

**Шăна** (*пăйлатса пĕрин патĕнтен теприн патне кайса*). Есир çĕнĕ хыпар илтнĕ-и? Кăмпа тус вăрçа тĕнет. (*Пурте аллисене сулаççĕ*).

**Кушак**. Мĕн тума есĕ, Упа тус, уçă мар, пуçна усса ларатăн?

**Упа**. Хрестен ман çурăма вĕлернĕ.

Ех, тĕппĕм, савнă çурăм,
Мана тăлăха хăвартăн.
Ех, хуйхă мана, хуйхă!
Епĕ арăмпа ырлăх курса
. . . . пурнаймăп ĕнтĕ!
Савăнса вăйă выляймăп!
Сăпка çинче ачашласа,
Йур йурласа çупăрласа,
Лăстăр-лăстăр силлесе
Ачашлаймăп ачана.

(*Йĕрет*).

Кушак. Ĕç, халĕ Упа тус, хуйху çăмăллан-мĕ-и? (*Ĕçет, хуйхăрса хăйне аллисемпе çапать*).

Шăна. Вăрçă пулать, илтрĕр-и?..
Кăмпасем вăрçа кайаççĕ... пурте кайаççĕ...

Кăвакарнисем авђах кайасшăн мар. Епĕр кăвакарнисем пуйансем теççĕ. (*Пурте аллисене суллаççĕ*).

Сăвăр. Ну, Упа тус, çăмăл пекех пулђĕ.

Упа. Çăмăллатрĕ çавă.

Кушак. Тыт халĕ, тата тепре ĕç?

Упа. (*Ĕçет, аллисемпе сулкалат*).

Пит те çăмăл пулђĕ ĕнтĕ!

Кушак. Апла пулсан, виççĕмĕшне тыт халĕ.

Упа (*тытса ĕçет*). Халĕ ĕнтĕ таплама та пултаратăп!

Сăвăр. Ей, Упа тус, кăтарт халĕ ађасем йепле пăрçа вăрлаççĕ? (*Упа кăтартат*).

Кушак. Арăмсем йепле кĕпе çăваççĕ, кăтарт халĕ. (*Упа кăтартат*).

(*Мулкаç параппан çапат. Сăвăр тăмра, Кушак купăс калат. Автан авăтат. Пурте йĕри-тавра тăрса*).

Тра-та-та
Тра-та-та—
Тилĕ тус
Кађђа карĕ
Кушака

(*Ташлаççĕ. Матлан упа, унтан пурте харăс*).

*Ђаршав.*

Хакĕ 5 пус